ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ШЫВПА ТИВӖÇТЕРЕС ТАТА ШЫВА ЮХТАРСА КĂЛАРАС ЕНӖПЕ ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИСЕНЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНӖСЕМ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ ВЛАÇӖН ОРГАНӖСЕМ ХУШШИНЧЕ ÇӖНӖРЕН ПАЙЛАССИ ÇИНЧЕН" САККУНӖН 1 ТАТА 2 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КӖРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи нарăс уйăхĕн 13-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Шывпа тивĕçтерес тата шыва юхтарса кăларас енĕпе пурнăçламалли уйрăм полномочисене Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2021 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 94 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2021, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьяра "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин, Шупашкар хулин" сăмахсене "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хули хула округĕн, Чăваш Республикин Шупашкар хули хула округĕн" сăмахсемпе улăштарас;

2) 2 статьян пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас, "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин, Шупашкар хулин" сăмахсене "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хули хула округĕн, Чăваш Республикин Шупашкар хули хула округĕн" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕ
3 №